

# ХĂЙ ХАЛĂХНЕ, МАТТУРСЕНЕ САНЛАТЬ

ЕНЕР Шупашкарта, К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен литература музейĕнче, Владимир Иванович Агеев художник ĕçĕсен выставки уçăлнă. Ана Чăваш Республикин халăх художникĕ 60 çул тултарнă тĕле йĕркеленĕ. Агеев творчествинче чăваш халăх историйĕпе çыхăннă событисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Нумай пулмасть художник «Чăвашсем темиçе турра ĕненнĕ, ислам еннелле туртăннă тата вĕсене тĕне кĕртнĕ вăхăтра» ятлă пысăк ĕç вĕçленĕ.

В. И. Агеев ял çыннисен пурнăçĕпе те кăсăкланать, унти пултаруллă çынсене санлать. Вăл ÿкернĕ картинăсенчен чылайăшĕнче — Елчĕк районĕнчи ентешĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, канăвĕ. Творчествăра графика та пысăк вырăн йышăнать. Çав ÿкерчĕксем кĕнеке-журнал вулакансене савăнтараççĕ. В. И. Агеев ĕçĕсем тĕрлĕ выставкăсенче ырă ята тивĕç пулнă.

Вăл творчество ĕçĕнче малашне те тимлĕ, тăрушуллă пуласса, халăх кăмăлне çĕклекен паха ÿкерчĕксемпе савăнтарасса шанас килет.

Э. АЛЕКСЕЕВ.

Ю. Дмитриев фотоÿкерчĕкĕ.